**Сăмах – район пуçлăхне**

# Çĕнĕ çулта та пĕр-пĕрне ăнланса пурăнар, ĕçлер

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Пĕтĕмпе 20 ял патне çити çул турăмăр кăçал. Кунта çакна каласа хăвармалла. Вак çул сарнă çулсене 2008 çулта асфальтпа сарса пĕтермелле. Çапла майпа 23 километр çĕнĕ çул тунă. Ку вăл умĕнхи çулхинчен 2 хут ытларах кăтарту. Çула юсассипе те ĕçсем япăх мар пычĕç. Мăн Сĕнтĕртен Мăн Хураçка витĕр Ишмулана каякан, Муркаш-Хорнуй-Платкасси, Тойкилтĕ-Кĕртекасси, «Волга»-Вăрмой çулсене юсанă кăçал, Юнкăра пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕ уçăлчĕ, пĕтĕмпе вĕсен йышĕ 7 çитрĕ. Районта тĕслĕхлĕ библиотекăсем 30 çитрĕç. Уйрăм çынсен çурчĕсене, социаллă сфера объекчĕсене те çут çанталăк газĕ кĕртнĕ.

Паян районти халăха çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе тĕрлĕрен программăна пурнăçлатпăр. 2007 çулта çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черетре тăракансенчен 6 çемьене ипотека кредитне 1926 пин тенкĕлĕх панă.

2002-2010 çулсене валли йышăннă “Çурт-йĕр” программăпа килĕшӳллĕн 2006 çулта йĕркеленĕ списокпа 7 çамрăк çемьене иртсе каякан çулта çурт-йĕр туянма е тума унăн хакĕн 40 процентĕ чухлĕ – пурĕ 1734,838 пин тенкĕлĕх патшалăх пулăшăвне патăмăр. Асăннă программăпа йĕркеленĕ кăçалхи списокра 11 çамрăк çемье черетре тăчĕ пулсан, 9-шĕ 3234,495 пин тенкĕлĕх тавăрса памалла мар субсиди илчĕç.

Тепĕр “Яла 2010 çулччен социаллă аталантарасси” программăпа ялта пурăнакан 7 çын 1230 пин тенкĕлĕх субсиди илчĕ. Çавăн пекех 9 çамрăк çемьепе çамрăк специалист 4036,742 пин тенкĕлĕх субсиди илнĕ.

2007 çулта çавăн пекех ветерансемпе инвалидсене, халăхăн социаллă пулăшу кирлĕ ытти сийĕсене пулăшу парассипе те тимлерĕмĕр. Федераллă саккунсемпе тата РФ, ЧР ытти нормативлă акчĕсемпе килĕшӳллĕн çăмăллăхсемпе тата пособисемпе, пенси укçипе вăхăтра тивĕçтернĕ. Районта ачасем ытларах çурални те районта демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăру лайăхланасса шантарать. 2007 çулхи 11 уйăхра 397 (2006 çулта – 338 ача) ача çуралчĕ районта. Ĕçсĕррисен йышĕ те чаксах пырать.

2008 çул бюджетне, районăн социаллă-экономика аталанăвĕн прогнозне йышăннă ĕнтĕ. Апла пулсан кăçал пĕлтĕрхинчен тăрăшарах ĕçлемелли çеç юлать.

**– 2007 çул Ача çулталăкĕ пулчĕ. Мĕнле ĕçсем туса ирттерме май килчĕ Чăваш Республикин Президенчĕн çак Указне пурнăçласа?**

– Чи малтанах асăннă Указа пурнăçа кĕртессипе районта ĕç комиссине тата ĕç планне палăртрăмăр. Ачана тĕрĕс воспитани парса ӳстерессинче çемье çав тери пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та çемье пĕлтерĕшне, вĕсенчи педагогика культурине ӳстерессипе, сывă пурнăç йĕркине çирĕплетессипе çыхăннă мероприятисене ытларах ирттерме тăрăшрăмăр. Çемьесемпе çавра сĕтел хушшинче калаçусем, çемьесен ырă опычĕпе паллаштарас тĕллевпе “Атте, анне тата эпĕ – спорта юратакан çемье”, “Музыкăна юратакан çемье”, “Нумай вулакан çемье”, çамрăк çемьесен фестивалĕсем, “Çулталăкри чи лайăх çемье” конкурс ирттрĕç. Районти халь çеç асăнннă конкурсра çĕнтерне Юнкăри Апроськинсен çемйи республикăра “Ĕçчен çемье” номинаци çĕнтерӳçи пулса тăчĕ.

Ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра çулталăк тăршшĕпех “Çамрăк çемье” клуб ĕçлерĕ. Унта çемье хутшăнăвĕсен психологийĕпе çыхăннă ыйтусене пăхса тухрĕç. Вĕрентӳ пайĕ çумĕнчи диагностикăпа консультаци паракан центр психологĕсем социаллă педагогсемпе, психологсемпе, класс ертӳçисемпе тĕрлĕрен семинарсемпе тренингсем ирттернĕ. Ашшĕ-амăшĕсемпе педагогсене 118 уйрăм консультаци панă.

Кашни ашшĕ-амăшĕн, паллах, чи кирли – ачи сывă пулни. Ачасен сывлăхне сыхлассипе, аталантарассипе, воспитани парассипе, методика пулăшăвĕсем парассипе районти тĕп больницăн пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Сывă ачасен пӳлĕмĕсем хушшинче пирĕн районти Нискассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнчи сывă ачасемпе ĕçлекен пӳлĕм республикăра чи лайăххи шутланать.

Нискассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулти çул çитмен çамрăксен “Çамрăклăх” центрĕ тата ачасен кĕлеткине юсассипе ĕçлекен шкулсем ĕçлеççĕ.

Массăллă спорта аталантарассипе те районти шкулсенче нумай ĕçсем туса ирттереççĕ. Талантлă çамрăксемпе вĕренекенсем кашни чĕрĕк хыççăн 25 отличник район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендине 200-шер тенкĕ илеççĕ.

Ачасене пур енлĕ аталантарассинче хушма вĕрентӳ учрежденийĕсем пысăк пĕлтерĕшлĕ. Шкул ачисен 66,5 процентĕ пушă вăхăта кружоксемпе секцисенче, тĕрлĕрен пĕрлешӳсенче ирттерет.

Социаллă пулăшу кирлĕ ачасене районта уйрăмах тимлĕх уйăрма тăрăшатпăр. Март уйăхĕнче ирттернĕ ырă кăмăллăх марафонĕнче 58 çемьене ача япалисене парса пулăшнă. Ун вăхăтĕнче пуçтарăннă 94 пин тенкĕ укçана тăлăх ача пур, нумай ачаллă, сахал тупăшлă, ачасене опекăна илнĕ çемьесене парса пулăшнă.

РФ, Чăваш Республикин правительствисем ача пур çемьесене пулăшу парассипе нумай ĕç туса ирттереççĕ. Ачашăн çемьерен хакли нимĕн те çук. Çавăнпа та паян ачасене çемьене пурăнма илмелли мĕн пур условисене туса хунă. 2006 çулта ачана çемьене пурăнма илнĕ (приемная семья) çемье районта пĕрре пулнă пулсан, 2007 çулта вĕсен шучĕ 6 çитрĕ. Вĕсенче 7 ача çемье ăшшине тупрĕ.

Социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнĕ çул çитмен 59 çамрăк, сахал тупăшлă çемьесенчи 215 ача социаллă хӳтлĕх пайĕ урлă шкул çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли лагерьсенче каннă.

Районта çапкаланчăк, тимлĕхсĕр юлнă тата право йĕркине пăсакан ачасемпе профилактика ĕçне ирттерессипе те нумай тимлетпĕр. Кăçал ăнăçсăр çемьесенче пурĕ 85 рейд ирттернĕ, 351 çемьере пулнă. Çакна та палăртса хăварас килет, çак кунсенче “Ача çулталăкĕнче” туса ирттернĕ ĕçсене республикăра пĕтĕмлетрĕç. Çул çитмен ачасене хӳтĕлессипе 3 район лайăх ĕçленине палăртрĕç пулсан, вĕсенчен пĕри – пирĕн район.

Теветкеллĕ ушкăна кĕрекен ачасемпе ноябрьте ведомствăсем хушшинчи канашлу ирттернĕ. Ача-пăча библиотекинче çул çитмен çамрăксен “Шанăç” клубĕ йĕркеленчĕ. Унта ачасене сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарассипе тренингсем ирттереççĕ, ачасене уйрăммăн та йышăнаççĕ специалистсем.

Паллах, Ача çулталăкĕ вĕçленни ачасемшĕн тумалли ĕçсем пĕтнине пĕлтермест. Çĕнĕ 2008 çулта та хамăрăн ачасемшĕн, район пуласлăхĕшĕн çине тăрса тăрăшмалла.

**– 131-мĕш Федераллă саккун вăя кĕнĕренпе икĕ çул çитрĕ. Мĕнле хак панă пулаттăр ял тăрăхĕсен ĕçĕсене?**

– Асăннă саккун вăя кĕнĕренпе малтан район шайĕнче татса панă ыйтусене вырăнсенче татса пама пуçларĕç. Малтанах çăмăлах пулмарĕ пулин те, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем суйлавçăсен шанăçне тӳрре кăларассишĕн тимлени куçкĕретех. Паян ял тăрăхĕсем хăйсем çине тиеннĕ ĕççене пысăк яваплăхпа туни курăнать. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем йывăрлăхсем умĕнче çухалса кайманни савăнтарать.

Паян ял тăрăхĕсем нумай ыйтăва вырăнта татса параççĕ. Ялсене тирпей-илем кĕртессинчен пуçласа культура учрежденийĕсене тытса тăрасси, çĕр ыйтăвĕсене, ытти пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парасси таранах. Шыв, ăшă, газ, çутă кĕртес ыйтусене ял тăрăхĕсем район администрацийĕпе пĕрле татса параççĕ. Нумай ял тăрăхĕнче шыв ыйтăвĕ çивĕч тăрать. Çавăнпа та шыв башнисене ял тăрăхĕсен балансĕсем çине илмелле. Мăн Сĕнтĕр, Юнкă, Катькас ял тăрăхĕсем шыв башнисене хăйсем çине куçарчĕç ĕнтĕ. Ку ĕç Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче те пырать. Культура учрежденийĕсене юсассипе, газ кĕртессипе те чылай ĕçсем туса ирттерчĕç ял тăрăхĕсенче. Çавăн пекех ял тăрăхĕсенче хăйсен бюджечĕсене предпринимательство ĕçĕпе пысăклатаççĕ. Культура учрежденийĕсем паракан тӳлевлĕ пулăшусемпе. Юнкă ял тăрăхĕнче акă çапла майпа кăçал 187471 тенкĕ турĕç. Çав укçа-тенкĕпе музыка аппаратурине илнĕ, Юнкăри Культура çуртне юсанă. Тĕслĕх библиотекăсен йышĕ 30 çитрĕ.

Вырăнсенче пушар хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе те ĕçлеççĕ. Çавăн пекех граждансла оборона тата чрезвычайлă лару-тăруран сыхланмалли мероприятийĕсен ĕç планĕсене çирĕплетнĕ тата ытти те.

Ял тăрăхĕсен ĕçне вырăнти депутатсене активлăрах явăçтарма пуçларĕç. Ĕç опычĕ ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен ку тĕлĕшпе икĕ çул хушшинче пуçтарăнчĕ. Пĕр çитменлĕхсемсĕр мар, паллах. Çитес çул халăхпа пĕр-пĕрне ăнланса татах та хастартарах ĕçлессе шанас килет.

**– Юрий Александрович, наци проекчĕсене пурнăçа кĕртесси районта епле пулса пырать-ха?**

– “АПК аталантарасси” наци проекчĕ ял çыннисен пурнăçне те, йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ ял хуçалăх предприятийĕсен пурнăçне те çăмăллăхсем илсе килчĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермисене реконструкцилесе, çĕнĕ технологи çине куçмалла – акă мĕнле тĕллев пулмалла паян ял хуçалăх предприятийĕсен. Ку вара выльăх-чĕрлĕх продукцине ытларах туса илме, ял хуçалăхĕнчи кадрсен ыйтăвне татса пама та пулăшать.

Районти хуçалăхсем 2007 çулта кредитсене пĕтĕмпе 50 миллион тенке яхăн илчĕç. Ильяч яч. хис., Суворов яч. хис., “Свобода”, “Ударник”, “Герой” хуçалăхсем унпа эффективлă усă курчĕç. Ку тĕлĕшпе çĕнĕ çулта татах та хастартарах пулмалла.

“АПК аталантарасси” наци проекчĕ çавăн пекех уйрăм хушма хуçалăхсене аталантарма ялта пурăнакансене çăмăллатнă кредит илме майсем туса пачĕ. Пирĕн районта пурăнакансем кăçал 938 кредита пурĕ 153591 пин тенкĕлĕх илнĕ. Ку вăл республикăра чи лайăх кĕтартусенчен пĕри. Асăннă наци проекчĕ пурнăçа кĕме пуçланăранпа вара патшалăх паракан çак çăмăллăха пурĕ 1772 çемье 275745 пин тенкĕлĕх илнĕ.

“АПК аталантарасси” наци проекчĕ ял хуçалăх кооперативĕсене йĕркелеме те çулсем уçса пачĕ. Паянхи куна районта пурĕ 18 ял хуçалăх потребительсен кооперативне йĕркеленĕ, 7 кооператив аккредитаци витĕр тухнă. Кăçал ку тĕлĕшпе тата та тăрăшса ĕçлемелле. Кашни ял тăрăхĕнчех пулмалла вăл.

“Вĕрентӳ” наци проекчĕ те вĕрентӳпе воспитани ĕçне 2007 çулта татах та çӳллĕрех шая çĕклеме май пачĕ. Нискассипе Москакасси шкулĕсем РФ Президенчĕн грантне – 1 миллион тенке, Муркаш шкулĕ ЧР Президенчĕн грантне – 200 пин тенке тивĕçрĕç. Уйрăм вĕрентекенсенчен Йӳçкасси шкулĕнчи историпе обществознани учителĕ В.И. Тихонов РФ Президенчĕн премине 100 пин тенке тивĕçрĕ, “Солнышко” ача сачĕн воспитательници О.В. Прокопьева ЧР Президенчĕн премине –10 пин тенке. Наци проекчĕпе класс ертӳçисене укçа хушса тӳлеççĕ. Çавăн пекех пултаруллă вĕрентекенсене хавхалантармалли ытти мелсене те уçса пачĕ наци проекчĕ.

Районти пур вĕрентӳ учрежденийĕсенче те Интернета тухаççĕ. Районти кашни 16 вĕренекен пуçне 1 компьютер тивĕçет. 2007 çулта вĕрентӳ учрежденийĕсене класс комплекчĕсем, литература, çĕнĕ оборудовани, сĕтел-пукан кӳрсе килнĕ. Ачасене турттарма района тепĕр 3 автобус тата пĕр микроавтобус килчĕ.

“Сывлăх” наци проекчĕ те района нумай ырă улшăну илсе кĕчĕ. Пĕр сăмахпа каласан, халăх сывлăхне сиплес ĕç палăрмаллах улшăнчĕ. Чи малтанах пуçламăш звенора медицинăпа санитари пулăшăвĕ парасси лайăхланчĕ. Йывăр çын хĕрарăмсемпе ача çуратакан хĕрарăмсене паракан сертификатсем пурнăçа кĕчĕç. В гепатитран, хĕрлĕ шатраран, полиомиелитран тата грипран прививкăсем тунă. 35-55 çулсенчи çынсене хушма диспансеризаци, сывлăхшăн хăрушă тата сиенлĕ вырăнта ĕçлекенсене хушма медосмотр витĕр кăларнă. Асăннă наци проекчĕпе килĕшӳллĕн 2006 çулта “Сывлăх” наци проекчĕпе килĕшӳллĕн пирĕн района 5 миллион та 868 пин тенкĕлĕх медицина оборудованийĕ килчĕ: рентген аппарачĕ, УЗИ аппарачĕ, электрокардиграф, фиброгастроскоп, “Васкавлă пулăшу” машинисене çĕннисемпе улăштартăмăр пулсан, 2007 çулта медицина оборудованийĕ тепĕр 3 миллион та 846 пин тенкĕлĕх килсе çитрĕ: цифрăллă системăпа ĕçлекен флюорограф, лаборатори оборудованин комплекчĕ, тепĕр “Васкавлă пулăшу” машини (В класлă) килнĕ. Районти сывлăх хуралçисем пилотлă проекта хутшăнаççĕ. Çакă вĕсене пациентсен сывлăхĕшĕн тата та ытларах тăрăшма хавхалантарать.

Тепĕр наци проекчĕ вăл - “Гражданссене меллĕ тата хăтлă çурт-йĕр”. Вăл ялта пурăнакансемпе çамрăк специалистсене хваттерлĕ, çурт-йĕрлĕ пулма пулăшать. Асăннă наци проекчĕ районта мĕнле пурнăçланни, районта пурăнакансене çурт-йĕрлĕ пулма мĕнле пулăшни çинче тĕплĕн чарăнтăм ĕнтĕ эпĕ маларах. Манăн çакна хушса калас килет. 2008 çулта та çамрăк çемьесене, районта пурăнакансене ку тĕлĕшпе малалла пулăшатпăр. Çакна валли 3 млн. та 293 пин тенкĕ хывса хăварнă бюджета. Кунсăр пуçне федераллă бюджетран тепĕр 7 млн. тенкĕ килмелле. “2010 çулччен ялсене социаллă аталантарасси” программăпа килĕшӳллĕн республика бюджетĕнчен 30 çултан иртнĕ ялта пурăнакансене пулăшма 1 млн. та 200 пин, çамрăк специалистсене пулăшма 1 млн. та 500 пин тенкĕ килмелле.

**– Çитес çулхи тĕллевсем, задачăсем тата мĕнлисем?**

– 2007 çула пĕтĕмлетсе çакна каламалла: умра çĕнĕ плансем, тĕллевсем. Каларăм ĕнтĕ, çакна районăн 2008 çулхи социаллă-экономика аталанăвĕн прогнозĕнче палăртса хăвартăмăр. Районăн 2008 çулхи бюджетне те йышăннă. Тумалли, пурнăça кĕртмелли кашни отрасльтех пур. Ял хуçалăхне ура çине тăратассишĕн тимлемелле пирĕн. Промышленноçра та продукци пахалăхне лайăхлатмалли, вăя перекетлеме май паракан технологипе çине тăрарах ĕçлемелле.

Çĕнĕ 2008 çулта обществăлла инфраструктурăна малалла аталантармалла. Çитес çул кашни ял патне асфальт çула туса пĕтермелле, республика шайĕнчи çулсене юсамалла, халăха ĕçмелли таса шывпа тивĕçтерессипе тата тăрăшарах тимлемелле. Наци проекчĕсене малалла пурнăça кĕртессипе ĕçлемелле.

Çĕнĕ пуçламалли ĕçсем те сахал мар пирĕн. Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн Указĕпе килĕшӳллĕн ялти клубсене модернизацилессипе ĕçлемелле. Кашмаш тата Панкли шкулĕсене тума проект хатĕрлеме пуçламалла. Çӳп-çап тăкмалли полигона ĕçлеттерме пуçламалла. Районти тĕп больницăн поликлиникине тăвассипе тимлемелле, проект хатĕрлемелле. Районти Культура çуртне реконструкцилессипе те çитес çул ĕçлемелле. Район центрĕнчи физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли центра хута ямалла тата ытти те.

Чăваш Республикин Президенчĕ çĕнĕ 2008 çулта Республика кунне пирĕн районта ирттерме йышăнчĕ. Ку пирĕншĕн пысăк чыс, явапалăх та. Ăна чыслăн тата çӳллĕ шайра хатĕрленсе ирттермелле пирĕн.

Мĕн палăртнине пурнăçласси вара район администрацийĕ, предприятисемпе организацисен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, пĕтĕм халăх пĕрле пĕр тĕллевпе ĕçленинчен килет. Çапла пултăр тесе тăрăшапăр.

Сăмаха вĕçлесе пынă май пурне те çĕнĕ 2008 çул тата çывхарса килекен Христос çуралнă кун ячĕпе саламлатăп. Пурсăра та çĕнĕ çулта çĕнĕ ӳсĕмсем тума ырлăх-сывлăх сунатăп. 2008 çула ЧР Президенчĕ Ырă ĕçсен çулталăкĕ, РФ Президенчĕ Çемье çулталăкĕ тесе палăртрĕç. Апла пулсан ытларах ырă ĕçсем тăвар, пĕр-пĕрне ăнланса пурăнар, ĕçлер. Вара çемьесем те, район та, республика та, Раççей те çирĕп пулĕç. Хамăр пурнăça лайăхлатассишĕн 2008 çулта татах та тăрăшарах пĕрле вăй хурар.

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*

Юратнă çыннăмăр, хисеплĕ ĕçтешĕмĕр, кăмăллă, хаклă юлташăмăр - Орининти вăтам шкулта учительте чылай çул ĕçлесе ырă ят илнĕ **Фаина Петровна АЛЕКСАНДРОВАН** çак кунсенче юбилей. Паллă кун ячĕпе ăшшăн та хĕрӳллĕн саламлатпăр. Сан ĕçӳ паха вăрлăх пекех: эсĕ вĕрентнĕ вуншар-çĕршер ача паян çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче вăй хурать, тăван ен, Тăван çĕршыв тĕреклĕхне вăйлатать, илемне ӳстерет.



Фаина Петровна, сирĕн хăвăр суйласа илнĕ ĕçре татах нумай çул ĕçлесе çамрăк ăрăва пурнăçăн тĕрĕс çулĕ çине тухма пулăшмалла пултăр. Çакна валли сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

Эс ӳлĕмрен те йăрă, хастар пул,<br>
Хальхи пекех хитре çӳре, хавассăн кул.<br>
Умри çулна такăрлатсах пырсан,<br>
Телей те савăнăç кăна курсам.

**Саламлаканĕсем: Оринин шкул администрацийĕ, пĕрле ĕçлекенсем, шкул ачисем.**

Хаклăран та хаклă çыннăмăра – Чамăш ялĕнче пурăнакан **Вера Титовна ВЕРШКОВАНА** юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр.

Юбилей ячĕпе саламласа сана эпир мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем пурнăçра кĕрсех пыччăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кĕрекӳ тăвансенчен ан татăлччăр, ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Ырлăх-сывлăх, тулли телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: Оринин шкул администрацийĕ, пĕрле ĕçлекенсем, шкул ачисем.**



Юратнăран та юратнă мăшăра, аннене, хунямана, кукамая, аппана – Мулкачкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ **Зоя Митрофановна СМЕЛОВАНА** 70 çулхи юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр.

Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 6 хĕрĕ, кĕрĕвĕсем, 12 мăнукĕ, шăллĕпе кинĕ, тăванĕсем, тус-юлташĕсем.**



Юратнă мăшăра, аттене, пиччене тата шăллăма, хăтана – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Константин Дмитриевич СПИРИДОНОВА** пĕтĕм чун-чĕререн хисеплесе, ырлăх-сывлăх сунса 50 çулхи юбилей ячĕпе чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем пурнăçа кĕрсех пыччăр, суйласа илнĕ ĕçĕнче ăнăçу, пысăк ӳсĕм сунатпăр, çывăх тăванусене пулăшса пынăшăн сан вăй-хăвату ӳссе пытăр. Çемье ăшши пурнăçра сана вăй-хал парса тăтăр, малашнехи çулна уçса пытăр. Эпир сана яланах юрататпăр, эс пурришĕн чунтан савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, тăхлачипе хăти, тăванĕсем.**

Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан юратнă мăшăра, аттене, шăллăма, пиччене, хуньстарике – **Александр Мефодьевич АЛЕКСАНДРОВА** 60 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе чун-чĕререн саламлатпăр. Эсĕ пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Эсĕ ырă



кăмăлупа, тирпейлĕхпе, ĕçченлĕхпе палăрса тăратăн. Сана эпир ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр, ватлăху канлĕ пултăр. Пирĕншĕн эсĕ яланах ырă кăмăллă пулнă, малалла та çаплах пултăр.

Çулусем иртни сана ан кӳтĕр тунсăх,<br>
Вăй-халусем çеç пулччăр иксĕлми.<br>
Сана сунатпăр ырлăх-сывлăх,<br>
Тата çап-çут телей нихçан сӳнми.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 2 ывăлĕ, кинĕ тата мĕн пур тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă, юратнă çыннăмăра – Елшик ялĕнче пурăнакан **Евстафий Романович РОМАНОВА** 80 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн Турра тав тăватпăр. Сумлă юбилей ячĕпе саламласа юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Ырă кăмăлушăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн çĕре çити таймапуç.

Ах, аттеçĕм, татах пурăн эс пире савăнтарса,<br>
Эс ӳстернĕ шурă хурăн нумай лартăр кашласа.<br>
Сан садра çитĕнеççĕ тĕрлĕ-тĕрлĕ йывăççем.<br>
Айĕнче чупса çӳреççĕ сан юратнă мăнуксем.

**Салампа хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсемпе мăшăрĕсем тата кĕçĕн мăнукĕсем.**



Оринин ял тăрăхĕнчи Пиккикасси ялĕнче пурăнакан хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă аннене тата хунямана, ырă кăмăллă асаннене – **Зинаида Александровна ПРОКОПЬЕВАНА** 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Вăл пирĕншĕн тунă ырă ĕçĕсемшĕн ăна çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр. Пире татах савăнтарса пурăнма сурпан пек вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, çирĕп сывлăх, такăр çул сунатпăр. Санăн питӳ çинчен савăк кулă ан кайтăр, вак-тĕвекшĕнех кăмăлу ан хуçалтăр.

Юратнă çыннăмăр! Тавах сана эсĕ пурришĕн, пурнăç çулĕ çинчи йывăрлăхсене çĕнсе пыма пулăшнишĕн, вăхăтра ăс панишĕн.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, кĕрĕвĕпе кинĕ, 3 мăнукĕ.**



Çĕнĕ çул! Мĕнле савăнăçлă кун, илемлĕ вăхăт. Çак уявпа пĕр вăхăталла килчĕ пирĕн хаклăран та хаклă, чи çывăх çăннăмăрăн, юратнă мăшăрăн, аттен, асаттен, кукаçин, хăтан тата тăванăмăрăн - Турай ял тăрăхне кĕрекен Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Викентий Викторович ИВАНОВĂН** çуралнă кунĕ, вăл декабрĕн 30-мĕшĕнче 70 çул тултарать. Çав шутран 40 çул ытла тăван Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра мĕн ваталиччнех водительте ĕçлерĕ. Викентий Викторович коллективра, ял халăхĕ хушшинче ĕçченлĕхĕпе, хастарлăхĕпе, ырă кăмăлĕпе тата сăпайлăхĕпе палăрса тăчĕ. Яваплăха çирĕп туйса хăйĕн тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулнă. Çавăншăн сума суса чĕререн тав тăватпăр. Эсĕ чăннипех чи пысăк хисепе, тимлĕхе тивĕçлĕ. Ĕçре палăрнăшăн нумай Хисеп грамотисене илме тивĕçлĕ пулнă. Ĕç ветеранне юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем тата хăтипе тăхлачисем.**